27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944 АВГУСТ 25 ЭРНЕКУН 167(6662) №

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Арми генералне МАЛИНОВСКИЕ

УКРАИНӐРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем, танковӑй соединенисемпе пехота ҫав тери хӑвӑрт пырса ҫапнипе, паян, августӑн 23-мӗшӗнче ҫулйӗрсен паха узелне тата тӑшманӑн СЕРЕТ шывӗпе ПРУТ шывӗ хушшинчи оборонин вӑйлӑ тӗреклетнӗ пунктне ВАСЛУЙ хулине туртса илнӗ.

ВАСЛУЙ хулине туртса илессишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн КРАВЧЕНКӐН, танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн ВОЛКОВӐН, танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн АЛЕКСЕЕВӐН, ШУТОВ полковникӑн, КОВАЛЕВ подполковникӑн, ПАВЛОВСКИЙ подполковникӑн, ОСАДЧИЙ полковникӑн танкисчӗсем; ТРОФИМЕНКО генерал-лейтенантӑн, ПЕТРУШЕВСКИЙ генерал-лейтенантӑн, ГОРЯЧЕВ генерал-лейтенантӑн, КИНДЮХИН генерал-майорӑн, ПУТЕЙКО полковникӑн ҫарӗсем; артиллери генерал-майорӗн ГУСЕВӐН артиллерисчӗсем; авиаци генерал-майорӗн ВИТРУКӐН, РАССМОТРОВ майорӑн, ВОЙТЕНАЙТЕС майорӑн, ВАСИЛИН майорӑн, МУСАТОВ майорӑн летчикӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве палӑртса хӑварас тесе, ВАСЛУЙ хулине туртса илессишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаҫсене орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, августӑн 23-мӗшӗнче, 22 сехетре хамӑр Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, ҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа вуникӗ хут пӗр харӑс персе, Украинӑри 2-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, ВАСЛУЙ хулине туртса илнӗскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, ВАСЛУЙ хулине ирӗке кӑларассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче пулнӑскерсене, питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн ТАВ ТӐВАТӐП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1944 ҫулхи августӑн 23-мӗшӗ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Арми генералне ТОЛБУХИНА

УКРАИНӐРИ 3-мӗш фронт ҫарӗсем, малалла наступлени туса пырса, паян, августӑн 23-мӗшӗнче, тӑшманӑн ДНЕСТР шывӗн анат тӑрӑхӗнчи оборонин тӗреклетнӗ паха пункчӗсене БЕНДЕРЫ хулипе БЕЛГОРОД-ДНЕСТРОВСКИЙ (АККЕРМАН) хулине штурмласа туртса илнӗ.

Ҫапӑҫусенче ҫаксем чапа тухнӑ:

БЕНДЕРЫ хулине туртса илессишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче ГАГЕН генерал-лейтенантӑн, ШКОДУНОВИЧ генерал-майорӑн, КРУЗЕ генерал-майорӑн ҫарӗсем; артиллери генерал-майорӗн БАЛАЕВӐН, КОВАЛЕВ полковникӑн артиллерисчӗсем; авиаци генерал-полковникӗн СУДЕЦӐН летчикӗсем.

БЕЛГОРОД-ДНЕСТРОВСКИЙ (АККЕРМАН) хулине туртса илессишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче ШЛЕМИН генерал-лейтенантӑн, БАХТИН генерал-лейтенантӑн, НИКИТИН полковникӑн, ВЛАСОВ полковникӑн, СМИРНОВ подполковникӑн ҫарӗсем; артиллери генерал-майорӗн АЛЕКСЕЕНКӐН артиллерисчӗсем; авиаци генерал-лейтенанчӗн ЕРМАЧЕНКОВӐН летчикӗсем; ГОРШКОВ контр-адмиралӑн, 2-мӗш рангри капитанӑн ДАВЫДОВӐН, ГРИГОРЬЕВ майорӑн морякӗсем; инженери ҫарӗсен генерал-полковникӗн КОТЛЯРӐН, НОМИНАС полковникӑн, ПУЗЫРЕВСКИЙ полковникӑн саперӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве палӑртса хӑварас тесе, БЕНДЕРЫ хулипе БЕЛГОРОД-ДНЕСТРОВСКИЙ хулине туртса илессишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаҫсене орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, августӑн 23-мӗшӗнче, 23 сехетре хамӑр Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, ҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа вуникӗ хут пӗр харӑс персе, Украинӑри 3-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, БЕНДЕРЫ хулипе БЕЛГОРОД-ДНЕСТРОВСКИЙ хулине туртса илнӗскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, БЕНДЕРЫ хулипе БЕЛГОРОД-ДНЕСТРОВСКИЙ хулине ирӗке кӑларассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче пулнӑскерсене, питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн ТАВ ТӐВАТӐП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1944 ҫулхи августӑн 23-мӗшӗ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Совет Союзӗн Маршалне КОНЕВА

УКРАИНӐРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем наступление вӑйлатса пырса, паян, августӑн 23-мӗшӗнче, авиаци промышленноҫӗн пысӑк центрне тата Краков хули енчи ҫулсен паха узелне ДЕМБИЦА хулине штурмласа туртса илнӗ.

ДЕМБИЦА хулине туртса илессишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче ЖАДОВ генерал-лейтенантӑн, КУРОЧКИН генерал-полковникӑн, ЛЕБЕДЕНКО генерал-лейтенантӑн, ОЗИМИН генерал-майорӑн, ТЕРТЫШНЫЙ генерал-майорӑн, ПИЧУГИН генерал-майорӑн, МОТОВ генерал-майорӑн, МЕТАЛЬНИКОВ генерал-майорӑн, ЗУБОВ генерал-майорӑн, МИЩЕНКО генерал-майорӑн, СКРЫГАНОВ полковникӑн, КУЧЕРЕНКО полковникӑн, ПЕТРЕНКО полковникӑн, ГРИНВАЛЬД-МУХО полковникӑн ҫарӗсем; артиллери генерал-полковникӗн ВАРЕНЦОВӐН, артиллери генерал-майорӗн ПОЛУЭКТОВӐН, артиллери генерал-майорӗн КАБАТЧИКОВӐН артиллерисчӗсем; танковӑй ҫарсен генерал-полковникӗн НОВИКОВӐН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн ЧУПРЫГИНӐН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн РОМАНОВӐН, танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн ПОЛУБОЯРОВӐН танкисчӗсем; авиаци генерал-полковникӗн КРАСОВСКИН, авиаци генерал-майорӗн КАМАНИНӐН, авиаци генерал-майорӗн ГАЛУНОВӐН, авиаци генерал-майорӗн АРХАНГЕЛЬСКИН, ЮЗЕЕВ полковникӑн летчикӗсем; инженери ҫарӗсен генерал-лейтенанчӗн ГАЛИЦКИН, ПОДОЛЬННЫЙ полковникӑн, КОНЦЕВОЙ полковникӑн саперӗсем; НЕСТЕРОВ полковникӑн, БОГОМОЛОВ полковникӑн связисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве палӑртса хӑварас тесе, ДЕМБИЦА хулине туртса илессишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаҫсене «ДЕМБИЦКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, августӑн 23-мӗшӗнче, 24 сехетре хамӑр Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, ҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа вуникӗ хут пӗр харӑс персе, Украинӑри 1-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, ДЕМБИЦА хулине туртса илнӗскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, ДЕМБИЦА хулине ирӗке кӑларассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче пулнӑскерсене, питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн ТАВ ТӐВАТӐП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршыв ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1944-мӗш ҫулхи августӑн 23-мӗшӗ.

МУСКАВ, КРЕМЛЬ

Верховный Главнокомандующине Совет Союзӗн Маршалне СТАЛИН юлташа

Хаклӑ Иосиф Виссарионович!

Шупашкарти чӑлха фабрикин коллективӗ, паттӑр Хӗрлӗ Ҫарӑн историллӗ чаплӑ ҫӗнтерӗвӗсемпе хавхаланса тата пирӗн Тӑван ҫӗршыва фашистла нимӗҫ захватчикӗсенчен пӗтӗмпех ирӗке кӑларас ӗҫре хамӑрӑн паттӑр Хӗрлӗ Ҫара мӗнпур вӑйпа пулӑшма тӑрӑшса, самолет тума 32.660 тенкӗ укҫан, 54.160 тенкӗлӗх облигацисем, усӑ курман отпускшӑн илмелли компенсаци укҫине 15.740 тенкӗ хывнӑ.

Укҫа пухас ӗҫ малалла пырать.

Пирӗн укҫапа илнӗ самолета пирӗн работницӑн пиччӗшне — Шупашкар ҫыннине Совет Союзӗн Геройне Сапожников юлташа пама ыйтатпӑр.

Пирӗн ҫак пысӑк мар парне те тӑшмана пуҫӗпех ҫӗнтерес сехете ҫывхартма пулӑштӑр. Сире, пирӗн хаклӑ ҫулпуҫӑмӑр, хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ырлӑхӗпе чаплӑхӗшӗн нумай ҫулсем хушши ӗҫлеме сывлӑх сунатпӑр.

Фабрика директорӗ БОГУСЛАВСКАЯ,
Парторганизаци секретарӗ
КАМЕНЕЦКИЙ,
Фабзавком председателӗ ПИПИЛИ,
Фабрикӑри стахановецсем
АНДРИАНОВА, ГУРЬЕВА, БЕЛАЯ, ЯШКИНА, КРЫЛОВА.

Шупашкар

Чӑлха фабрикин директорне БОГУСЛАВСКАЯ юлташа, парторганизаци секретарьне КАМЕНЕЦКИЙ юлташа, фабзавком председательне ПИПИЛИ юлташа, фабрикӑри стахановецсене АНДРИАНОВА, ГУРЬЕВА, БЕЛАЯ, ЯШКИНА, КРЫЛОВА юлташсене

Шупашкарти чӑлха фабрикин рабочийӗсемпе работницисене, инженерӗсемпе техникӗсене тата служащийӗсене, самолет тума 32.660 тенкӗ укҫан, 54.160 тенкӗлӗх облигацисем тата усӑ курман отпускшӑн илмелли компенсаци 15.740 тенкӗлӗх хывнӑскерсене, манран тӑванла салам калӑр тата Хӗрлӗ Ҫар ячӗпе тав тӑвӑр.

Фабрикӑра ӗҫлекен работниксем ыйтни пурнӑҫа кӗрӗ.

И. СТАЛИН.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Арми генералне ТОЛБУХИНА
Арми генералне МАЛИНОВСКИЕ

УКРАИНӐРИ 3-мӗш фронт ҫарӗсем, УКРАИНӐРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем вӑйлӑн пулӑшнипе, аякран ҫавӑрса илмелли пултаруллӑ маневр тунӑ хыҫҫӑн тата фронтран атакӑланӑ хыҫҫӑн, паян, августӑн 24-мӗшӗнче, Молдаван ССР-ӗн столицине КИШИНЕВ хулине — ҫулйӗрсен паха узелне тата противник оборонин хӑватлӑ тӗреклетнӗ пунктне — штурмласа туртса илнӗ.

КИШИНЕВ хулине туртса илессишӗн ҫапӑҫнӑ чухне БЕРЗАРИН генерал-лейтенантӑн, ГАЛАНИН генерал-лейтенантӑн, КОРОТЕЕВ генерал-лейтенантӑн, ФИРСОВ генерал-майорӑн, ЖЕРЕБИН генерал-майорӑн, ЛАТЫШЕВ генерал-майорӑн, БИРЮКОВ генерал-майорӑн, СЕРЮГИН генерал-майорӑн, ШЮСТАЦКИЙ полковникӑн, СОКОЛОВ генерал-майорӑн, СЫЗРАНОВ генерал-майорӑн, ФОМИЧЕНКО полковникӑн, ФЕДОРОВСКИЙ генерал-майорӑн, ХИЛЬЧЕВСКИЙ полковникӑн, ФРОЛОВ полковникӑн, АФОНИН полковникӑн, ЦВЕТКОВ генерал-майорӑн, ЧИЖОВ полковникӑн, БУНЯШИН генерал-майорӑн ҫарӗсем; артиллери генерал-майорӗн КОСЕНКӐН, артиллери генерал-майорӗн ЦИНАЛӐН, ПАВЛОВ полковникӑн, СОКОЛОВ полковникӑн, КЛИМЕНКОВ подполковникӑн артиллерисчӗсем; танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн ПОЛОЗКОВӐН, АНИСИМОВ полковникӑн, ТЯГЛОВ полковникӑн, АНДРЕЕВ полковникӑн танкисчӗсем; авиаци генерал-полковникӗн СУДЕЦӐН, авиаци генерал-полковникӗн ГОРЮНОВӐН летчикӗсем; ФУРС полковникӑн, МАЛОВ полковникӑн, ЧЕВЫЧЕЛОВ полковникӑн саперӗсем; ФАЛИН полковникӑн, СУХИХ подполковникӑн связисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве палӑртса хӑварас тесе, КИШИНЕВ хулине туртса илессишӗн ҫапӑҫнӑ чухне уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаҫсене «КИШИНЕВСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, августӑн 24-мӗшӗнче, 22 сехетре хамӑр Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, виҫҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм тӑватӑ хут пӗр харӑс персе, УКРАИНӐРИ 3-мӗш тата 2-мӗш фронтсен паттӑр ҫарӗсене, КИШИНЕВ хулине туртса илнӗскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, КИШИНЕВ хулине ирӗке кӑларассишӗн ҫапӑҫнӑ ҫӗрте пулнӑскерсене, питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн ТАВ ТӐВАТӐП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1944 ҫулхи августӑн 24-мӗшӗ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Арми генералне МАЛИНОВСКИЕ

УКРАИНӐРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем, танксен соединенийӗсемпе утлӑ ҫар тата пехота питӗ хӑвӑрт тапӑнса пынине пула, противникӑн ЯССЫ хулинчен кӑнтӑртарахри группировкине ҫӗмӗрсе тӑкнӑ та паян, августӑн 24-мӗшӗнче, РОМАН, БАКЭУ, БЫРЛАД тата ХУШИ хулисене, противник оборонин стратеги тӗлӗшпе паха тӗреклетнӗ пункчӗсем пулса тӑраканскерсене, Румынин вӑтаҫӗрти районӗсене пымалли ҫулсене хӳтӗлесе тӑраканскерсене, туртса илнӗ.

РОМАН, БАКЭУ, БЫРЛАД тата ХУШИ хулисене туртса илессишӗн ҫапӑҫнӑ чухне танковӑй ҫарсен генерал-полковникӗн КУРКИНӐН, танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн КРАВЧЕНКӐН, танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн АЛЕКСЕЕВӐН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн АХМАНОВӐН, ЛЫСКИН полковникӑн, БЕЗНОШЕНКО полковникӑн, ШТАНЬКО полковникӑн, ШУТОВ полковникӑн, ОСАДЧИЙ полковникӑн, РЕШЕТНИКОВ полковникӑн, ЧУНИХИН полковникӑн, ХВАТОВ полковникӑн, ИВЛИЕВ подполковникӑн, КОВАЛЕВ подполковникӑн, ПАВЛОВСКИЙ подполковникӑн, ИНДЕЙКИН подполковникӑн, ОБДАЛЕНКОВ полковникӑн, ОСТАПЕНКО полковникӑн, АНТОНОВ подполковникӑн, ТИТАРЕНКО подполковникӑн, РОМАНЕНКО майорӑн, ПОПОВ майорӑн танкисчӗсем; ГОРШКОВ генерал-майорӑн, СЛАНОВ генерал-майорӑн, ГРИГОРОВИЧ генерал-майорӑн, КРУТОВСКИХ генерал-майорӑн Дон казакӗсем-кавалерисчӗсем; ШУМИЛОВ генерал-полковникӑн, ТРОФИМЕНКО генерал-лейтенантӑн, КОРОТЕЕВ генерал-лейтенантӑн, ФОМЕНКО генерал-майорӑн, МАРТИРОСЯН генерал-майорӑн, АВДЕЕНКО генерал-майорӑн, САФИУЛИН генерал-майорӑн, ГОРЯЧЕВ генерал-лейтенантӑн, ДЖАХУА генерал-майорӑн, ЛОСЕВ генерал-майорӑн, СМИРНОВ генерал-майорӑн, МОРОЗОВ генерал-майорӑн, ЛИЛЕНКОВ генерал-майорӑн, КИНДЮХИН генерал-майорӑн, МОШЛЯК полковникӑн, ПУТЕЙКО полковникӑн, ПЕРЕПЕЛИЦА полковникӑн, ОБУШЕНКО полковникӑн, ВАСИЛЕВСКИЙ полковникӑн, КОНЕВ полковникӑн ҫарӗсем; артиллери генерал-полковникӗн ФОМИНӐН, артиллери генерал-майорӗн ШМАКОВӐН, артиллери генерал-майорӗн ПЕТРОВӐН, артиллери генерал-майорӗн ГУСЕВӐН, артиллери генерал-майорӗн ЛЕБЕДЕВӐН, СИНИЦИН полковникӑн, НОВГОРОДСКИЙ полковникӑн артиллерисчӗсем; авиаци генерал-полковникӗн ГОРЮНОВӐН летчикӗсем; инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн ЦИРЛИНӐН, инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн ПЛЯСКИНӐН, НАСОНОВ полковникӑн, ФАДЕЕВ полковникӑн, ГОЛУКОВИЧ подполковникӑн, КОРЖОВ подполковникӑн саперӗсем; БОРИСЕНКО полковникӑн, ДРОБОТ полковникӑн, СТРЕЛЕЦКИЙ подполковникӑн связисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве палӑртса хӑварас тесе, РОМАН, БАКЭУ, БЫРЛАД тата ХУШИ хулисене туртса илессишӗн ҫапӑҫнӑ чухне уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаҫсене орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, августӑн 24-мӗшӗнче, 23 сехетре хамӑр Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, икҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм хут пӗр харӑс персе, УКРАИНӐРИ 2-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, РОМАН, БАКЭУ, БЫРЛАД тата ХУШИ хулисене туртса илнӗскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, РОМАН, БАКЭУ, БЫРЛАД тата ХУШИ хулисене ирӗке кӑларассишӗн ҫапӑҫнӑ ҫӗрте пулнӑскерсене, питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн ТАВ ТӐВАТӐП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1944 ҫулхи августӑн 24-мӗшӗ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

АВГУСТӐН 23-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Августӑн 23-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем ТАРТУ хулинчен кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре тата кӑнтӑртарахра, тӑшманпа ҫапӑҫса, халӑх пурӑнакан 25 пункта тытса илнӗ, вӑл шутра — МИННА, ХИЛЬЯ, ЛЯТИ, ИЛЛИ, ОТЕЦЯ ятлӑ ялсем тата РЭОЛА, УХТИ, АЙЯМА ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем.

ИЕЛГАВА (МИТАВА) хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем тӑшман пехотипе танкӗсен атакисене сирсе янӑ, унтан контратакӑсем тунӑ та хӑйсен позицийӗсене лайӑхлатнӑ.

ЛОМЖА хулинчен кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре тата кӑнтӑртарахра пирӗн ҫарсем ҫапла наступлени туса пынӑ, тӑшманпа ҫапӑҫса, халӑх пурӑнакан 80 пункта ытла туртса илнӗ, вӑл шутра — МАЛКИНЯ-ГУРНА ятлӑ узловой чугун ҫул станцийӗ, ВЫЖЫКИ, ВЫПЫХИ, ШУМОВО, АНДЖЕЕВО, ПЕНХРАТКА, КАЛИНОВО, ЗАРЕМБЫ, КАНЬКОНО ятлӑ пысӑк ялсем тата ЛОМЖА хулинчен 13 километр кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехри ЧЕРВОННЫЙ БОР ятлӑ чугун ҫул станцийӗ.

ПРАГАРАН ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре тата хӗвелтухӑҫнерехре пирӗн ҫарсем тӑшман пехотипе танкӗсен атакисене сире-сире янӑ.

УКРАИНӐРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем, наступление вӑйлатса пырса, августӑн 23-мӗшӗнче авиаци промышленноҫӗн пысӑк центрне тата паха чугун ҫул узелне ДЕМБИЦА хулине штурмласа туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата, тӑшманпа ҫапӑҫса, халӑх пурӑнакан ытти 70 пункта ытла йышӑннӑ, вӑл шутра — ОСТАЛЕНЖ, ВАМПЕЖУВ, РАДОМЫСЛЬ, ВЕЛЬКИ, ЖАРУВКА, РУЖА, КЕНДЗЕЖ, КАВЕНЧИН, ЗАВАДА, ЛОПУХОВА ятлӑ пысӑк ялсем тата ПШЕЦЛАВ, ДОМБЬЕ, ПУСТКУВ, КОХУНАВКА ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем.

УКРАИНӐРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем, танковӑй соединенисемпе пехота ҫав тери хӑвӑрт пырса ҫапнипе, августӑн 23-мӗшӗнче ҫулйӗрсен паха узелне тата тӑшманӑн СЕРЕТ шывӗпе ПРУТ шывӗ хушшинчи оборонин вӑйлӑ тӗреклетнӗ пунктне ВАСЛУЙ хулине туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата, тӑшманпа ҫапӑҫса, халӑх пурӑнакан ытти 150 пункта ытла йышӑннӑ, вӑл шутра — МОЛДАВАН ССР-ӗн КОВНЕШТИ район центрӗ, КУЗА ВОДЭ, БУТЯ, НЕГРЕШТИ, ГЫРЫЧЕНИЙ, ОЗЕШТИЙ, КЕТРЕШТИ, ЗЭПОДЕНИЙ, ФЕРЕШТИЙ, ДОБРОВЭЦКИЙ, ПРИСЕКАНИЙ, КОСТУЛЕНЫ, МАКАРЕШТЫ, МИЛЕШТЫ, БАХМУТ, ПАЛАНКА, МЫНДРА ятлӑ пысӑк ялсем тата КОРНЕШТИ ГАРА, ПЫРЛИЦА, ГРАЖДУРЬ, СКЫНТЕРЯ, РЕБРИЦА, БУХЭЕШТИ, БЭРЗЕШТИЙ, БЭЛТЕНИЙ, НЕГРЕШТИ, ТОДИРЕШТИЙ ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем.

УКРАИНӐРИ 3-мӗш фронт ҫарӗсем, наступлени туса пырса, августӑн 23-мӗшӗнче тӑшманӑн ДНЕСТР шывӗн анат тӑрӑхӗнчи оборонин тӗреклетнӗ паха пункчӗсене БЕНДЕРЫ хулипе БЕЛГОРОД-ДНЕСТРОВСКИЙ (АККЕРМАН) хулине штурмласа туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата, тӑшманпа ҫапӑҫса, халӑх пурӑнакан ытти 200 пункта ытла йышӑннӑ, вӑл шутра — Молдаван ССР-ӗн район центрӗсем КОМРАТ хулипе РОМАНОВКА ялӗ, Измаил облаҫӗнчи СТАРОКАЗАЧЬЕ, ШАБО, САРАТА, АРЦИЗ район центрӗсем, БЕССАРАБСКАЯ ятлӑ узловой чугун ҫул станцийӗ, ПЕРЕСЕЧИНА, ЗАГАЙКАНА, БАЛАБАНЕШТЬ, ЧИМИШЕНИ, БУЛЬБОКИ, ГИСКА, ЗОЛОТЯНКА, КАШКАЛИЯ, БАЙМАКЛИЯ, БАТЫРЬ, ГУРА-ГАЛБЕНА, КАРАКУЙ, КНЯЗЕВКА, ЖАВГУР, ДЕЗГИНГЖЕ, БОРОГАНЫ, ВИШНЕВКА, САДЫК, КИРСОВА, ТВАРДИЦА, КРАСНА, ПАРИС, ФРИДЕНСТАЛЬ, ВАДЕНЬ, КОРНИЛОВКА ятлӑ пысӑк ялсем тата БУЛЬБОКИ, СОКОЛЕНЬ, СКИНОСА, ПЕТРЕШТЬ, АБАКЛИЯ, ЧОК-МАЙДАН, КОМРАТ, ДЕЗГИНЖЕ, САРАТА ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем.

Фронтӑн ытти участокӗсенче палла улшӑнусемех пулман.

Августӑн 22-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 174 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 94 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

ПИРЕН АВИАЦИ РУМЫНСЕН КОНСТАНЦА, СУЛИНА, ВИЛКОВ ПОРЧӖСЕНЕ ТАПАННИ

Хура тинӗс флочӗн авиацийӗ румынсен Констанца, Сулина, Вилков порчӗсене тапӑннӑ. Констанца портӗнче пирӗн летчиксем пулӑшу крейсерне, пӗр пин тонна таякан транспорта тата хурал катерне путарнӑ. Сулина портӗнче пӗр пин тонна таякан транспорта, 2 баржӑна тата пӗр катера путарнӑ. Вилков портӗнче тӑшман мониторне путарнӑ.

Америка орденĕсене пани

Августăн 22-мĕшĕнче Мускавра Америка посольствинче Хĕрлĕ Çарăн боецĕсене, сержанчĕсене, офицерĕсене тата генералĕсене Америка орденĕсене панă. Çав орденсемпе вĕсене 1944 çулта Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен президенчĕ Франклин Д. Рузвельт наградăланă. Вĕсене Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен тата Совет Союзĕн тăшманне — гитлерла Германие хирĕç пыракан кĕрешÿре хастарлăх кăтартнăшăн тата хăйсен çар тивĕçне калама çук лайăх пурнăçланăшăн наградăланă. Наградăланисем çар ĕçĕсене туса тăнă пирки çав наградăсене хăйсем илме пултарайманнине, Пĕрлешÿллĕ Штатсен Совет Союзĕнчи посолĕ В. А. Гарриман çав орденсене, наградăланисене памашкăн, Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарне В. М. Молотова панă.

Орденсене панă чухне США посольствинче çаксем пулнă: США посольствин советникĕ Дж. Кэннан господин, посольство секретарĕсем В. Пэркинс, А. Колдер, Ф. Стивенс, Э. Пэйдж, Л. Томпсон господинсем тата Пĕрлешÿллĕ Штатсен Совет Союзĕнчи миссийĕнчен С. Сполдинг генерал-майор, бригадăй генерал В. Крист, 1-мĕш рангри капитан П. Фэлт тата ыттисем те.

Совет Союзĕ енчен çаксем пулнă: Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ А. Я. Вышинский, генерал-полковник Ф. Ф. Кузнецов, авиаци генерал-полковникĕ А. В. Никитин, генерал-лейтенант А. А. Грызлов, генерал-майор В. М. Евстигнеев, СССР Наркоминделĕн ответлă сотрудникĕсем К. А. Михайлов, Б. Ф. Подцероб, В. М. Павлов, Г. И. Фомин.

Орденсене панă чухне В. А. Гарриманпа В. М. Молотов çакăн пек сăмахсем каланă:

Пĕрлешÿллĕ Штатсен Совет Союзĕнчи посолĕ В. А. Гарриман каланă сăмах

Пĕрлешÿллĕ Штатсен çак наградисене Хĕрлĕ Çарăн паттăр геройĕсенчен хăшĕсене, анчах та питĕ сахаллăшне, парасси хамшăн питĕ пысăк хисеп пулса тăрать тесе шутлатăп эпĕ. Ку вăл пĕчĕк паллă çеç, анчах та вăл эпир, американецсем, Хĕрлĕ Çарăн кашни салтакĕне летчикĕн хăйĕн паттăрлăхне чунтан-чĕререн хисепленине кăтартать, вăл пирĕн пĕрлехи тăшмана — Гитлерпа фашизма — пĕтĕмпех аркатса тăкас ĕçре Хĕрлĕ Çар питĕ пысăк ĕç тунине Америка халăхĕ хапăл туса йышăннине пĕлтерет. Пирĕн пĕрлехи тĕллеве пурнăçлас ĕçре хаяр çапăçусем пулĕç-ха, анчах та паян, союзниксен çарĕсем сывлăшран хăйсен юлташĕсем пулăшса пынипе хĕвелтухăç, хĕвеланăç тата кăнтăр енчен тапăнса пынă чухне, эпир çĕнтерессе яруççăн палăрса тăрать.

Çав салтаксен çар ĕçĕсем мана çак орденсене вĕсене кашнине алла тыттарма май памашкăн эпĕ ÿкĕнетĕп, орден панă чухне эпĕ вĕсене, алă тытса, çапла каланă пулăттăм: «Сире çак медальпе наградăлама мана питĕ пысăк хисеп килсе тухрĕ. Сирĕн халăхăр Сирĕн паттăр ĕçĕрсемпе савăнса мухтанинне эпир, тинĕс леш енчи çынсем, хапăл тăватпăр. Пĕрлешÿллĕ Штатсен президенчĕ, пирĕн пĕрлехи ĕçре Эсир çав тери паха ĕçсем тунине эпир йышăннине кăтартмашкăн, Сире çак орденпа наградăлама хушрĕ».

Çак наградăсене илекен çынсем пирĕн пĕрлехи ĕçре пысăк вырăн йышăнчĕç. Анчах та эпĕ çакна шанса тăратăп: Совет Союзĕн гражданĕсем, тăшмана çĕнтерме пултăр тесе хăйсен тивĕçне çав тери тăрăшса пурнăçласа пыраканскерсем, çак уйрăм çынсене çакăн пек хисеплени — Пĕрлешÿллĕ Штатсен халăхĕ Совет Союзĕнчи арçынсемпе хĕрарăмсене хисеплени пулать, тесе ăнланĕç.

Вăрçăра çĕнтерни хыççăн тĕнчене йĕркелес ĕçре пирĕн пĕрле нумай ĕçсем тумалла пулать-ха. Çав тĕнчере ирĕклĕхе юрататкан халăхсем телейлĕ, тулли пурнăçпа, кам та пулин тапăнасран хăрамасăр пурăнма пултарĕç. Пирĕн çĕршывсем тата пирĕн боецсем хушшинче вăрçă вăхăтĕнче йĕркеленĕ çыхăнусене эпир вăрçă хыççăн та хамăрăн пĕрлехи мирлĕ тĕллевсене пурнăçлама сыхласа хăварăпăр.

СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов каланă сăмах

Господин посол,

Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен президенчĕ Хĕрлĕ Çарăн паттăр боецĕсемпе командирĕсене наградăлама панă орденсене Сирĕн алăран илсе, эпĕ Сире Америка президентне тата правительствине çав наградăланă çынсен ячĕпе тата Совет правительстви ячĕпе çак çапăçу наградисемшĕн чунтан-чĕререн тав тума ыйтатăп.

Совет воинĕсен паха ĕçĕсене Эсир тата Сирĕн правительство пысăк хак пани Хĕрлĕ Çарăн боецĕсемпе офицерĕсене, темиçе миллион совет çыннине калама çук хытă савăнтарĕ. Гитлер тата преступникла фашистла правительствăсем мире юратакан пирĕн халăхсене ирĕксĕр вăрçтарнă çак вăрçă нумай сиен турĕ, нумай асап кăтартрĕ. Вăл пирĕн чи лайăх çынсенчен нумайăшне, хăйсен халăхĕшĕн, унăн ирĕклĕхĕпе малашнехи телейлĕ пурнăçĕшĕн хăйсенĕ хăйсем шеллемесĕр çапăçнăскерсене, вĕлерсе пĕтерчĕ. Пирĕн малашне йывăр çапăçусем нумай тумалла пулать-ха. Тăшмана çĕнтермешкĕн пирĕн халь те, малашне те пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме тивет. Анчах çак кĕрешÿĕн вут-çулăмĕнче Совет Союзĕпе Пĕрлешÿллĕ Штатсен тата демократиллĕ ытти çĕршывсен халăхĕсен çирĕп туслăхĕн никĕсĕсем туптанса тухрĕç. Çав туслăх пирĕн пĕрлехи тăшмана, пурăнмалли кунĕсем сахал юлнă тăшмана, аркатса тăкасси патне илсе çитерĕ тата халăхсем хушшинче çирĕп мир тума пулăшĕ.

Паян пирĕн пĕрлехи тăшмана икĕ фронтран çеç пырса çапмаççĕ, ăна Совет Союзĕн, Америкăн тата Британин çарĕсем тата вĕсен сывлăшрипе тинĕсри вăйĕсем пур енчен те калама çук вăйлă хĕсеççĕ. Тăшманăн лару-тăрăвĕ шанчăксăррине, вăл пĕтес патне çывхарса пынине тăшман лагерĕнче халь нумайрах та нумайрах çынсем ăнланаççĕ. Паян Вашингтонра Пĕрлешÿллĕ Штатсен, Великобританин тата Совет Союзĕн делегачĕсем ĕçлеме пуçланă. Вĕсене тĕнчере хăрушсăрлăх туса ăна сыхламалли принципсене çырса хатĕрлес ĕçе пуçлама хушнă, çак организаци çирĕп мир тумашкăн питех те кирлĕ. Мире юратакан нацисен ырă кăмăлĕ тата çĕнĕ вăрçă пуçласа яракансенчен сыхламалли шанчăклă майсем кирлине халĕ ытларах ăнланса илни çав ĕç ăнăçассине шантарса тăрать. Паян совет воинĕсене Америка паракан çак пысăк наградăсем пирĕн çарсене çĕнĕ паттăр ĕçсем тума тата пирĕн халăхсен туслăхне малалла çирĕплетме тепĕр хут чĕнĕç.

Францири вăрçă ĕçĕсем

СОЮЗНИКСЕН ЭКСПЕДИЦИЛЛĔ ВАЙĔСЕН ВЕРХОВНАЙ КОМАНДОВАНИЙĔН ШТАБĔ ПĔЛТЕРНИСЕМ

ЛОНДОН, августăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вайĕсен верховнай командованийĕн штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă: [illegible]

ЛОНДОН, августăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). [illegible]

ФРАНЦУЗСЕН ШАЛТИ ХĔÇПĂШАЛЛА ВАЙĔСЕМ ПАРИЖА ИРĔКЕ КĂЛАРНĂ

ЛОНДОН, августăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). [illegible]

СОЮЗНИКСЕН ÇАРĔСЕМ БОРДО РАЙОННЕ АННĂ

ЛОНДОН, августăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви панă хыпарсем тăрăх, Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: августăн 23-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле союзниксен çарĕсем Бордо районне десант чаçĕсем антарнă. Çак операцие Америка çарĕсен çĕр çинчи ĕçĕсемпе килĕштерсе тунă.

Бордо хули Луара шывĕнчен 185 миля кăнтăртарахра ларать. Америка çарĕсем Луара шывĕ урлă Нант хулипе Орлеан хули патĕнче пĕр эрне каярах каçса кайнăччĕ. Американецсен çак колонни ăçталла куçни çинчен пĕр эрне хушши пĕлтермесĕр тăчĕç.

Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ пĕлтерни

СОЮЗНИКСЕН ÇАРĔСЕМ ГРЕНОБЛЬ ХУЛИНЕ ЙЫШĂННĂ

ЛОНДОН, августăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕн паян пичетлесе кăларнă пĕлтерĕвĕнче çапла каланă: фронтăн Адриатика участокĕнче союзниксен патрулĕсем нумай тĕлте Метауро шывĕн кăнтăр хĕррине тухнă. Сан-Джорджо-ди-Пезаро хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехри сăртлă районра союзниксен çарĕсем нумай вырăнсенче 8 миля таран малалла кайнă.

Американецсен 7-мĕш армийĕн чаçĕсем Кăнтăр Францире аннă вырăнтан 140 миля çурçĕрелле кайнă, Гренобль хулине кĕнĕ. Вĕсене малалла çапла хăвăрт кайма французсен тăшмана хирĕç тăракан шалти вăйĕсем хытă пулăшнă. Çурçĕрелле куçса пынă май 7-мĕш арми чаçĕсем Динь, Систерон, Аспре, Ган, Сен-Бонне тата Аржантьер хулисене туртса илнĕ. Французсен çарĕсем хаяррăн çапăçнă хыççăн Мер хулине йышăннă, Тулон хули патне хĕвелтухăç енчен пырса тухнă. Тулон хулинче йывăр çапăçусем пыраççĕ, французсен хулана кĕнĕ çарĕсем хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă, унтан вара порт районĕ еннелле малалла куçнă. Марсель хулине анлă фронтпа çавăрса илме тытăннă. 17 пин çынна ытла тыткăна илнĕ.

Августăн 22-мĕшĕнче йывăр бомбардировщиксен пысăк вăйĕсем, истребительсем хÿтĕлесе пынипе, Силесири тата Австрири нефть предприятийĕсене тапăннă. Кăнтăр Францири çĕр çинче çапăçакан çарсене пулăшса, союзниксен авиацийĕ тăшман çулйĕрĕсене тата пĕр çĕре пухăнса тăнă çарĕсене пыра-пыра тапăннă. Самолетсен ытти ушкăнĕсем Çурçĕр Италири тата Югославири шоссе çулĕсемпе чугун çулсем çинчи объектсене тапăннă.

СОЮЗНИКСЕН ÇАРĔСЕМ МАРСЕЛЬ ХУЛИНЕ КĔНĔ

ЛОНДОН, августăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви паян каçхине союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕнчен çапла пĕлтернĕ: союзниксен çарĕсем Марсель хулине кĕнĕ, тенĕ.

ЛАВАЛЬПЕ ПЕТЕН «ПРАВИТЕЛЬСТВИ» ВИШИРЕН ТАРНĂ

ЖЕНЕВА, августăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Берлинра официальнăй йĕркепе пĕлтерÿ пичетлесе кăларнă. Çав пĕлтерÿрен çакă курăнать: Гитлерăн Вишири тарçисем Виширен тĕрлĕ çĕрелле тараççĕ.

ГЕРМАНИН ЮТ ÇĔРШЫВ ĔÇĔСЕН МИНИСТЕРСТВИН СОТРУДНИКĔСЕНЕ ТЫТСА ХУПНИ

СТОКГОЛЬМ, августăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). «Афтонтиднинген» хаçат çапла çырнă: «Берлинран çитнĕ хыпарсем тăрăх, Германин ют çĕршыв ĕçĕсен министерствинче ĕçлекенсенчен нумайĕшне тытса хупнă. Сăмахран каласан, фон Риттер посланнике, Артур Витте генеральнăй консула, Тимман вăрттăн советнике арестленĕ. Вĕсене пурне те Гитлера хирĕç пулса иртнĕ офицерсен пăлхавне хутшăннă тесе айăплаççĕ. Çавăн пекех тата çапла пĕлтереççĕ: ют çĕршыв ĕçĕсен министерствинче ĕçлекен чиновниксене нумайĕшне вырăнтан кăларнă. Ют çĕршыв ĕçĕсен министерствин протокол отделĕн заведующийĕ патĕнче ухтару тунă.

ГЕРМАНИРЕ ПУРНЕ ТЕ КИРЛĔ ТАВАРСЕМ ТУМА ПĂРАХНĂ

ЖЕНЕВА, августăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Берлинри радио çапла пĕлтернĕ: хĕçпăшалпа çар производствин министрĕ Шпеер хушнă тăрăх Германири мĕнпур фабрикăсемпе заводсенче пурне те кирлĕ таварсем, çар промышленноçĕпе çыхăнса тăман япаласем тума пачах пăрахнă.

ГЕРМАНИРЕ ТЕАТРСЕМПЕ ШКУЛСЕНЕ НУМАЙĔШНЕ ХУПАÇÇĔ

СТОКГОЛЬМ, августăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта илнĕ хыпарсем тăрăх, Гитлер «тотальнăй мобилизаци» тума приказ [illegible] мар, аслă шкулсемпе ытти шкулсене те хупаççĕ. Августăн 14-мĕшĕнче Геббельс сотрудникĕ Землер çапла каланă: Германире часах пур театрсем те хупăнаççĕ [illegible]

Вашингтона Думбартон-Окс хулинче пулмалли конференцие кайма совет делегацийĕ пынă

ВАШИНГТОН, августăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). [illegible]

ХĂРУШСĂРЛĂХА СЫХЛАКАН ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ОРГАНИЗАЦИ ТĂВАС ТĔЛĔШПЕ ПУХНĂ КОНФЕРЕНЦИ УÇĂЛНĂ

ВАШИНГТОН, августăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). [illegible]

ДУМБАРТОН-ОКСРИ КОНФЕРЕНЦИРЕ

ВАШИНГТОН, августăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Думбартон-Оксри конференцире ĕнер каçхине пĕрремĕш пĕлтерÿ пичетлесе кăларнă. Унта çапла каланă:

«Августăн 21-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен виçĕ группăн руководителĕсен ларăвĕнче Эдуард Стеттиниуса (США) конференцин яланхи председательне суйланă. Стеттиниус çук чухне конференцире председатель ĕçĕсене Громыко (совет делегацийĕн руководителĕ) е Александр Кадоган (Британи делегацийĕн руководителĕ) черетпе туса пыраççĕ. Малтан мирпе хăрушсăрлăха сыхлакан пĕтĕм тĕнчери организацин пĕтĕмĕшлĕ принципĕсене сÿтсе явма йышăннă, çав принципсене совет делегацийĕ тăратнă.

Августăн 22-мĕшĕнче ирхине пулса иртнĕ ларура совет группи пĕтĕм тĕнчери организацин пĕтĕмĕшле принципĕсем çинчен хăйĕн шухăшĕсене каласа панă. Конференци делегачĕсем ун хыççăн çакăн пирки каласса таталнă: кăнтăрла иртсен Англипе Америка групписем мирпе хăрушсăрлăха сыхлакан пĕтĕм тĕнчери организаци çинчен хăйсен шухăшĕсене каласа памалла».

США-ра АМЕРИКĂРИ СЛАВЯНСЕН ИККĔМĔШ КОНГРЕСНЕ ИРТТЕРМЕ ХАТĔРЛЕНЕÇÇĔ

НЬЮ-ЙОРК, августăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Производствăллă профсоюзсен конгресĕн Нью-Йоркри организацийĕн исполнительнăй совечĕ Америкăри славянсен конгресне пулăшма йышăннă. Çав конгресс Питтобурцра сентябрĕн 23-мĕшĕпе 24-мĕшĕнче пулса иртмелле. Исполнительнăй совет производствăллă профсоюзсен конгресне кĕрекен мĕнпур профсоюзсене çав конгресса хăйсен представителĕсене яма чĕнет.

ЛОНДОНРА ФРАНЦИПЕ ЧЕХОСЛОВАКИН ДЕКЛАРАЦИНЕ АЛĂ ПУСНĂ

ЛОНДОН, августăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви çапла пĕлтерет: ĕнер Лондонра Франципе Чехословакин декларацине алă пуснă. Çав декларацире çапла каланă: Франципе Чехословаки хушшинчи çыхăнусем Мюнхенченхи пекех пулмалла. Франципе Чехословакин союзĕ çинчен калакан договора çĕнĕрен законлă туса хумалла (Мюнхен хыççăн ун пирки иккĕленме пуçланăччĕ). Декларацие Чехословакин премьер-министрĕ Шрамек тата Чехословакин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Масарик алă пуснă, Франци ячĕпе—де Голль генерал тата Францин Чехословаки правительстви çумĕнчи представителĕ Дежан алă пуснă.

ДАНИРИ ЗАБАСТОВКĂСЕМ

СТОКГОЛЬМ, августăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Швецири радио çапла пĕлтерет: Данири чылай хуласенче — Одонсра, Хоброра, Геррингра тата Ольборгра, нимĕçсем çынсене арестленине тата перепере вĕлернине хирĕç протестлесе, Копенгагенри пекех, 24 сехете пыракан забастовка тунă.

ИРĔКЕ КĂЛАРНĂ ЛЮБЛИНРИ ХАÇАТСЕМ

ЛЮБЛИН, августăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Ирĕке кăларнă Люблинра август уйăхĕн пĕрремĕш кунĕсенчен пуçласа икĕ хаçат тухать: «Речь посполита» — Польша халăхĕн ирĕклĕх комитечĕн органĕ тата «Газета Любельска» — вырăнти демократсен органĕ. Çав хаçатсен пĕрремĕш номерĕсем поляк çыннисене тĕнчери лару-тăрупа паллаштараççĕ.

РУМЫНИРЕ ÇĔНĔ ПРАВИТЕЛЬСТВО ТУНĂ

ЛОНДОН, августăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Бухарестри радио паян каçхине çапла пĕлтернĕ: Румынире çĕнĕ правительство тунă. Правительство пуçĕнче Константин Санатеску генерал тăрать. Çĕнĕ правительствăна Братиану тата Маниу кĕнĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чăвашсен ялхуçалăх институчĕн вĕренÿ хуçалăхне çакăн пек работниксем кирлĕ: чернорабочисем, тимĕрçĕ, тракторист, зоотехник, ветеринари фельдшерĕ, счетовод-кассир.

Условисем çакăн пек: [illegible]

Адрес: [illegible] Сельхозинститута.

Вырса илнĕ тырă—пухса илнĕ тырă мар-ха

Тырă вырассине хăвăртлатнипе пĕрлех, кĕлте кÿрсе капана хывас, авăн çапас тата государствăна тырă парас ĕçсене те пĕтĕм вăйпа туса пымалла

РЕСПУБЛИКĂРИ МТС-сем ТРАКТОРСЕМПЕ ТУМАЛЛИ ĔÇСЕН ПЛАННЕ 1944 ÇУЛХИ АВГУСТĂН 20-МĔШĔ ТĔЛНЕ МĔН ЧУХЛЕ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА
(процентпа)

МТС-сем	Тракторсемпе ĕçленĕ
Вăрнар	106,9
Йĕпреç	98,6
Куславкка	93,2
Елчĕк	83,6
Шăхасан	82,3
Чкаловски	80,0
Красноармейски	79,6
Тăвай	75,7
Калинино	75,6
Çĕрпÿ	74,0
Комсомольски	66,9
Сĕнтĕрвăрри	65,8
Ишлей	64,6
Вăрмар	64,5
Çĕмĕрле	61,1
Сĕнтĕр	60,0
Первомайски	59,0
Шупашкар	55,6
Улатăр	55,4
Кувакино	54,6
Сурмайдан	53,5
Етĕрне	53,2
Хĕрлĕ Чутай	49,8
Канаш	48,5
Пăрачкав	48,5
Элĕк	47,6
Октябрьски	45,0
Кожевенски	43,9
Шăмăршă	39,3

17 район силос хывмалли плана тултарнă

Августăн 20-мĕшĕ тĕлне республикăри 17 район силос хывмалли плана тултарнă. Уйрăмăнах силос хывас ĕç Комсомольски районра ăнăçлă пырать, кунта плана 129,5 процент тултарнă. Ун хыççăн Чурачăк, Кувакино, Сĕнтĕрвăрри, Чкаловски, Çĕмĕрле районĕсем пыраççĕ, вĕсем плана 121—103 процента çити тултарнă.

Муркаш, Канаш, Октябрьски, Сĕнтĕр, Тăвай районĕсем плана тултарас патне çывăхарнă.

Шăхасан, Пăрачкав, Советски, Куславкка районĕсем çаплах юлса пыраççĕ. Вĕсем плана 74 процентран пуçласа 79 процента çити кăна тултарнă. Юлса пыракан районсен малтисемпе танлашассишĕн пикенерех ĕçлемелле.

Государствăна тырă парас тĕлĕшпе воскресник иртертĕмĕр

ОКТЯБРЬСКОЕ, августăн 24-мĕшĕ. (Телефонпа). ВЛКСМ райкомĕ государствăна тырă леçес тĕлĕшпе иртнĕ канмалли кун ятарласа воскресник туса ирттерчĕ. Воскресник ăнăçлăн иртĕр тесе, малтан район центрĕнчи комсомол активне 22 çынна ялсене ятăмăр. Воскресника 386 çын (вăл шутран комсомолецсем 201 çын) хутшăнчĕç. Вĕсем çак кун хĕрлĕ обозсемпе Вăрмар хатĕрлев пунктне 1.125 центнер тырă леçрĕç.

Ку пирĕн организациллĕ ĕçĕн пуçламĕшĕ çеç-ха. Малашне татах воскресниксем [illegible]

А. ПЕТРОВА, ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

КОМБАЙНЕРСЕН ĂМĂРТĂВĔ

Громовпа Иванов, Указовпа Лукоянов тата Маркиянов комбайнерсем тырă вырса пухмалли плана тултарнă

Çĕрпÿ МТС-ĕн старши агрономĕ В. А. Клементьева юлташ пĕлтернĕ тăрăх, паллă комбайнерсем М. З. Громовпа В. А. Иванов юлташсем, августăн 22-мĕшĕ тĕлне кашниех пĕрер комбайнпа 118-шар гектар вырса пухса, хăйсен планне ытлашшипех тултарнă. Ĕçĕн пахалăхĕ лайăх. Иванов комбайнер 85 килограмм, Громов юлташ 75 килограмм горючи перекетлесе хăварнă. Громовпа Иванов тата ытти комбайнерсем хăйсем илнĕ обязательствăсене пурнăçлассишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ.

* * *

Елчĕк МТС-ĕн директорĕ П. А. Яшин юлташ çапла пĕлтерчĕ: МТС-ри комбайнсемпе 547 гектар вырса пухнă. Йĕпреç МТС-ĕнчи Маркиянов комбайнер чĕнсе çырнă хыççăн ăмăртăва тухнă В. В. Указов 116 гектар вырчĕ, комбайнпа планран ирттерсе 6 гектар пухса илчĕ. Лукоянов комбайнер та 115 гектар пухса, плана ытлашшипех тултарчĕ.

* * *

Етĕрне МТС-ĕнчен çапла пĕлтереççĕ: Çĕмĕрле МТС-ĕнчи Михайлов комбайнерпа ăмăртакан В. И. Токсубаев юлташ августăн 23-мĕшĕ тĕлне 107 гектар вырса пухнă.

* * *

Çĕмĕрле МТС-ĕн старши механикĕ Н. М. Петухов юлташ И. И. Михайлов комбайнер 75 гектар ыраш вырса пухни çинчен пĕлтерчĕ. Çуртыррисене комбайнсемпе вырма тытăнман-ха.

* * *

Красноармейски МТС-ĕ августăн 22-мĕшĕ тĕлне комбайнсемпе пурĕ те 160 гектар кăна вырса пухнă. Çак МТС-ри В. Г. Гаврилов комбайнер пĕр пĕччен 100 гектар ытла вырнă. Ытти комбайнсем МТС-ра бензин çук пирки начар ĕçлеççĕ. Анчах Гаврилов хăйĕн комбайнне краççинпах ĕçлеттерет. Вăл краççин çине тăвар ярса ăна ăшă çĕрте 2—3 кун тытать те, краççин вара бензин пекех лайăх çунакан пулать.

* * *

Йĕпреç МТС-ĕ комбайнсемпе 1.000 гектара яхăн вырса пухнă. Комбайнсемпе вырса пухас ĕçĕн мастерĕ А. И. Иванов юлташ паянхи кун тĕлне 146 гектар вырнă, П. Маркиянов юлташ та комбайнпа вырмалли плана тултарнă.

Çамрăксен бригади

ЙĔПРЕÇ. Калинин ячĕпе тăракан колхозра лашапа çапмалли молотилкăпа ĕçлеме çамрăксен бригадине организациленĕ. Бригадăна Александр Алаков ертсе пырать. Вăл хăй машинăна кĕлте ярса тăнă çĕрте ĕçлет. Бригадăра 11 çын, вĕсем пурте 12—15 çулхи çамрăксем. Денисовпа Терентьев юлташсем машина ăшĕнчен çапăнса тухакан улăма туртса хушăк патне çĕклеççĕ. О. Железнова улăма ура çине ывăтса тăрать. В. Иванов, И. Капустин, П. Архипов кăнтăрла молотилка патĕнче ĕçлеççĕ, çĕрле 4-шар лав кĕлте кÿреççĕ. Молотилкăна çапнă çĕрте çамрăксем вă- [illegible]

П. КУРАКОВ.

Уборка вăхăтĕнчи политикăллă-массăллă ĕç çинчен

Çак кунсенче Шупашкарта ВКП(б) райкомĕсемпе горкомĕсен пропагандăпа агитаци отдел заведующийĕсен, ВЛКСМ райкомĕсемпе горкомĕсен иккĕмĕш секретарĕсен тата çутĕç пайĕсен политпросвет енĕпе ĕçлекен инспекторĕсен республикăри канашлăвĕ пулса иртрĕ.

Канашлу пĕр ыйту — уборка вăхăтĕнчи политикăллă-массăллă ĕç çинчен сÿтсе яврĕ. Канашлура ВКП(б) Муркаш, Калинино, Çĕрпÿ, Тăвай райкомĕсен пропагандăпа агитаци отделĕсен заведующийĕсем Марков, Андреев, Игнатьев тата Михайлов юлташсем хăйсен ĕçĕ çинчен каласа пачĕç.

Калинино районĕнче уборка вăхăтĕнче политикăллă-массăллă ĕçе уйхирте, колхозниксем ĕçленĕ çĕрте туса пыраççĕ. Районра 320 агитатор, вĕсенчен коммунистсем 83 çын, комсомолецсем 110 çын. Агитаторсене уйрăм бригадăсем çумне çирĕплетнĕ.

ВКП(б) райкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕ уборка пуçланиччен канашлусемпе семинарсем ирттернĕ. Ку семинарсенче пуçламĕш парторганизаци секретарĕсемпе агитколлективсен руководителĕсем, вулав çуртĕсемпе клубсен тата библиотекăсен заведующийĕсем, çыхăну ĕçĕн работникĕсем пулнă. Унта СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «1944 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановление сÿтсе явнă. Çавăн пекех стена хаçат редакторĕсемпе те çак ыйтăва сÿтсе явнă. Коммунистсемпе комсомолецсен, колхозниксен пухăвĕсене ирттернĕ. Агитаторсем август уйăхĕнче кăна колхозсенче тĕрлĕрен темăсемпе 152 доклад ирттернĕ. Вăл докладсене итлеме 8.811 çын пухăннă.

Уйрăмăнах Хăмăш ялсоветĕнчи «Броневик» колхозри агитаторсем лайăх ĕçлеççĕ.

Агитаторсем мĕнпур ăнлантаруллă ĕçе колхоз ĕçĕпе çыхăнтарса туса пыраççĕ.

Уйкас Юнтапари, Шĕнерти, Ермошкăри, Мăн Явăшри, Ямбахтинăри, Кÿлхĕрринчи агитколлективсем те хăйсен ĕçне тивĕçлипе туса пыраççĕ. Агитаторсем хăйсем хирте пример кăтартса ĕçлеççĕ.

Çĕрпÿ, Тăвай, Муркаш районĕсенче те политикăллă-массăллă ĕçе начар мар йĕркеленĕ. Анчах çак районсенче вулав çурчĕсемпе клубсем хăйсен ĕçне çителĕксĕр туса пыраççĕ. Çутĕç работникĕсем, çавăн пекех ВЛКСМ райкомĕсем те ку тĕлĕшпе нимӗнех те туман. Вĕсем комсомолецсемпе ялти актива çак ĕçе явăçтарман. Çавăнпа хăшпĕр вулав çурчĕсем ĕçлемесĕр лараççĕ.

Канашлура Иванов (Вăрмар), Семенова (Элĕк), Казакова (Йĕпреç), Лукина (Комсомольское) юлташсем тухса каларĕç.

Канашлура ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн пропгруппин руководителĕ Масленников, ВКП(б) Чăваш Обкомĕн пропагандăпа енĕпе ĕçлекен секретарĕ Иванов, ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ çумĕнчи парти контроль комиссин Чăваш республикинчи уполномоченнăйĕн заместителĕ Сдобнов юлташсем пулчĕç.

Масленников юлташ хăйĕн сăмахĕнче хăшпĕр районсенчи агитациллĕ-массăллă ĕçри, уйрăмах политикăпа çутĕç учрежденисен ĕçĕнчи çитменлĕхсем çинчен чарăнса тăчĕ. Социализмлă ăмăртăва тивĕçлипе организацилеме кирли çинчен каларĕ.

Юлашкинчен ВКП(б) Обкомĕн пропаган- [illegible]

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместитель секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕ 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00660 Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2, ф. 6, 59×42 п. л. Тираж 16.000 экз.